ӖҪЛЕКЕНСЕМПЕ ХРЕСЧЕНСЕМ, СОВЕТ РЕСПУПЛӖКӖН САККУНӖСЕНЕ ВӖРЕНӖР!

№ Инв. 347
26-67

Н. ЛАКОВИЕР.

# СОВЕТ ПРОККУРАТТУРӖ,

## ТАТА ВӐЛ ХРЕСЧЕН ХАЛӐХНЕ МӖНШӖН КИРЛӖ.

Ф. К. ТРАСКОВИЧ ретаксиленӗ.

А. П. ЛБОВ куҫарнӑ.



Чăваш Автон. Сов. Сотс. Респуплĕкĕн Тĕпĕçтăвкомĕ хушнă пирки, ийун) уйăхĕнчен пуçласа малашне Чăваш Респуплĕкĕн Правиттĕлствин саккунĕсемпе хушусене тата С. С. Респуп. Сойусĕн, Р. Ф. С. Р-ĕн Тĕп правиттĕлствисен чи кирлĕрех саккунĕсене Чăваш Респуплĕкĕн Йуçтитсин Халăх Комиссариачĕ кăларма пуçлаť.

„Саккун хыпарĕшĕн" 1927 — мĕш çуллăх укçа тӳленисем, тата ăна укçасăр илсе тăраканĕсем малашне те илсе тăраççĕ.

Ку кĕнекене илес текенсен çапла атрĕспе çырса йамалла: ШУПАШКАР, Йуçтитсин Халăх Комиссариачĕ (гор. Чебоксары, Н. К. Ю.), ЧАССР.

РЕТАКСИ.

ӖҪЛЕКЕНСЕМПЕ ХРЕСЧЕНСЕМ, СОВЕТ РЕСПУПЛӖКӖН САККУНӖСЕНЕ ВӖРЕНӖР!

Н. ЛАКОВИЕР.

# СОВЕТ ПРОККУРАТТУРӖ, ТАТА ВӐЛ ХРЕСЧЕН ХАЛӐХНЕ МӖНШӖН КИРЛӖ.

ф. К. ТРАСКОВИЧ ретаксиленӗ.
А. П. ЛБОВ куҫарнӑ.

3886

ЧӐВАШ АВТН. СОТС. СОВ. РЕСП. ЙУҪТИТСИН ХАЛӐХ КОМИССАРИАЧӖ КӐЛАРНӐ.

ШУПАШКАР. изд. Н.К.Ю. ЧАССР. 1926 г.

Типография редакц. „Трудовой Газеты“ в г. Алатыре, ЧАССР
Тираж 3100 экз. Чувашлит № 72.

# Советӑн проккураттурӗ, тата вӑл хресчен халӑхне мӗншӗн кирлӗ.

**Револютси саккунлӑхне пурнӑҫа кӳртессине Советӑн проккураттурине туни Совет влаҫӗ хресчен халӑхӗн пурнӑҫне ҫӑмӑллатасшӑн тӑрӑшнине кӑтартаť.**

Пӗтӗм Сойус Коммуниссен (польшевиксен) парттипе Совет влаҫӗ чухӑнпа вӑтам хресчен вӑрҫӑ пирки йухӑннӑ пурнӑҫне ҫӑмӑллатасшӑн темӗнле майпала та тӑрӑшаҫҫӗ.

Йал йенелле пӑхӑр! Ҫӗр ҫинче ӗҫлесе тӑрӑшакансене пулӑшӑр! Хресчен ҫынни пурнӑҫне йусаса хресчен халӑхӗпе ӗҫлекенсен сойусне ҫирӗплетесси Совет Респуплӗкӗ умӗнче тӑракан ӗҫсенчен чи пахине Коммуниссен парттипе Совет влаҫӗ пӗр сӑмахсемпе ҫеҫ мар, ӗҫпеле те кӑтартаҫҫӗ.

Паллах ӗнтӗ ӗҫлекенсемпе хресчен влаҫне халӑх пурнӑҫне йӗркелетессипе патшалӑхӑн пурлӑхне хӑпартасси—вӑл йӑвӑр ӗҫ. Ӑна салатасси ҫеҫ помешчиксемпе пуршуйсене ҫӑмӑлтарах пулнӑ.

Пуршуйсен инттересӗшӗн патша пуҫласа йанӑ вӑрҫи, унтан кайран револютси вӑрҫи вӑхӑчӗсенче хапрӑк - савӑтсенче машшинсем кивелсе йапӑха кайнӑ, промышлӗннӑҫ валли кирлӗ сырйо пӗтсе ҫитнӗ, чукун ҫулсем кивелсе пӑсӑлса ҫите пуҫланӑ, хресчен халӑхӗн хуҫайстви те йапӑха йулнӑ. Вӗсене пӗтӗмпех кирлӗ таран йӗркелетесси—вӑл ӗнтӗ питех ҫӑмӑл ӗҫех мар вара. Пуринчен ытла пирӗн Совет Респуплӗкне ку таранччченех йӗри таврах пуршуаллӑ патшалӑхсем хупӑрласа тӑни канҫӗрлет. Ку таранччен вӗсем пирӗн респуплӗке пӗтересшӗн кӑлӑхах тӑрмашни хыҫҫӑн халӗ ӗнтӗ ӑна—тӗнчипе те ӗҫлекенсемпе хресченсен пӗртен пӗр респуплӗкне йышӑна пуҫларӗҫ пулсан та, анчах Совет влаҫӗн вӗсенчен пӗрмайах сыхӑ пулмалла, ҫителӗклӗ хӗрлӗ ҫар тытса тӑмалла; вӗсенчен пулӑшу кӗтмелли ҫук.

Пурнăç йусанасси, епир темĕн пек тăрăшсан та, йерипен пынинчен питех те тĕленмелли çук вара. Йалсенче патша йĕркисемпе контр-револ̧утси туса хăварнă сурансене тӳрлетмешкĕн малалла тата нумай тăрăшмалла пулаť.

Анчах, тем пек йăвăр пулин те ĕçлекенсемпе хресченсене кирлĕ ăнăçлă ĕçсем ку çулсенче пайтах тунă ĕнтĕ. Пĕр-икĕ çул маларах Советăн укçине никамах та илесшĕн марчĕ, хал̧ ĕнтĕ çирĕп хаклă (червонтсă, пăхăр, кĕмĕл) укçасем пур.

Протрасверсткăпа протналок вырăнне—çулран çул пĕчĕкленсе пыракан укçа-тенкĕлĕ куланай (хырăç). Чукун çулсем те хал̧ ĕнтĕ темиçе çул кайалла чухнехи пек мар, йусаннă.

Чукун çулсене те, прахутсене те йусаса йама пултарнă ĕнтĕ ку таранччен. Йерипен-йерипенех пирĕн промышлĕннăç те йӳнĕ кирлĕ таварсене хресченсене пама пуçлĕ. Кун пек паллă ĕçсене чилайах кăтартса пама пулаť.

Совет влаçĕ хресчен халăхне кирлĕ ĕçсем тунă хушшинче револ̧утсиллĕ саккунлăх çирĕплетмешкĕн 1922-мĕш çулта проккурорсене туни çинчен те кăтартмалла пулаť. Мĕне пĕлтеретши ĕнтĕ вăл револ̧утсин саккунлăхĕ, тата мĕн тума кирлĕши вăл йалсенче пурнакан хресчен халăхне?

## Револ̧утсилĕ саккунлăх мĕне пĕлтернине тата йал-хуçайствипе халăх пурлăхне хăпартасси çинчен.

Револ̧утсилĕ саккунлăх мĕне пĕлтернине вăл мĕншĕн кирлине пĕлесси йăвăрах та мар. Советăн проккураттурĕне пăхса тăракан Крыленккă йулташ сăмахĕ тăрăх—револ̧утсилĕ саккунлăх вăл—„Совет саккунĕсем чарман ĕçсене тумашкăн кашçи çыннах пысăк ирĕк паракан, тата кирек кама пулсан та саккун чарнă ĕçсене тунăшăн ăйăпламалла йĕрке туни пулаť", тет.

Пур йенчен те йĕркеллĕ пултăр, ĕçлекенсемпе хресченсем хăйсен респуплĕкĕн хуçайстви ĕçне лăпкăн ĕçлеме пултарччăр тенĕ тĕлĕшпе пирĕн тĕрлĕрен саккунсем пур. Çав саккунсем кăтартнă тăрăх çынсен

хăш-хăш ĕçĕсем усăллăн, кирлĕн курăнса тăраççĕ, ун пек ĕçсене тумашкăн вара никама та чармаççĕ. Çавăнпах тата пĕтĕм халăха сăтăр тăвакан ĕçсене кăтартнă, вĕсене тумашкăн вара хытă чараççĕ. Çак ĕçсене тăвакансене айăплаççĕ, урăхла каласан—вĕсене ĕçлеттерсе йусамалли çуртсене (тĕрмесене) тытса хупаççĕ те сута парса айăплаççĕ.

Илĕпĕр сăмахран—лаша-ĕне вăрланипе хресченĕн хуçайствине сийенлени, йе вăйпала хăратса кирек камран та пулин пĕр-пĕр йапала туртса илни. Хресчен ака-сука тăваť пулсан, уншăн ăна никам та чармасť; вăл хайĕн хуçайствине аван тытса тăраť пулсан, ăна ĕçчĕн тесе мухтаççĕ çеç. Анчах хресченех кӳршĕнне лаша вăрласан, йе пĕр-пĕр совет учрештенин слушашчийĕ хресченрен вçаткă хăратса ирĕксĕрлетсе илесшĕн пулсан, йе йалти советăн претçетаттĕлĕ хыснан туприне вăрлаť, хресченсене çапкалаť йе хĕрарăмсене ирĕксĕрлесе намăслантараť пулсан, кун пек ĕçсемщĕн вĕсем пурте саккун кăтартнă пек айăплă пулаççĕ. Ун пек çынсене персех вĕлермесен те пур пĕрех вара пĕр 3-5 çул таранлăх тĕрмене хупса лартаççех. Акă вара вăл мĕнрен курăнаť саккунлăпа саккунсăр ĕç тени.

Анчах, саккунсене пĕр кăларнийех çитмест-хе. Саккун хушнине пурин те пăхăнса ĕçлесе тăмалла. Халђ пирĕн кашни йалах Советăн саккунĕсем хушнине тĕрĕс тунипеле мухтанма пултараймасť.

Акă халĕ Совет влаçĕ йалсенче пур саккунсене хытă итлеччĕр тесе тăрăшаť, темĕнле май та шыраť. Мĕншĕн тесен йалсенче револђутсилĕ саккунлăха пурнăça кӳртни пĕр преступленисемпе (лаша-ĕне вăрласси, чĕртсе çунтарасси, çынна вĕлерессi, вçаткă илесси) крешессине çеç мар, вăл тата тĕрлĕрен харпăр ĕçлĕ çынсем саккунсăр ĕçсем тунине, сăмахран калăпăр—саккунсăр тытса хупасран, тĕрлĕрен кирлĕ мар штрафсем, хырăç-марăç пуçтарасран тата ытти те çавăн пек ирĕксĕрлĕхсенчен те сыхлама тăрăшаť.

Çапла вара револђутсилĕ саккунлăх хресчен çынне ахаљ çынран ĕçлĕ çынран пулма пултаракан сăтăр ĕçсенчен хăтармалла.

Калăпăр—çĕр йĕркелесси тухаттi йе куланай (хырăç) пухмалла пулаттi, килçурт уйăрмалла пулаттi, йе ăçтан та пулин укçа кивçен илмеллеи, кирек мĕнле çăмăллăх (лькоттă) кирли, йе тата кирек мĕнле пурлăх шырамалла пулаттi, йе совета суйламаллаи,—кирек хăçан та çавăн пек ĕçсенче револютсилĕ саккунлăх йалта хресчен тивĕçлĕхне хытă сыхлама хушаттi.

Проккурорăн вара Совет влаçĕ кăларнă саккунсене пурте итлесе ĕçлесе тăнине сыхласа тăмалла, саккунсăр ĕçсем тусан кирлĕ май туса йусамалла.

Советăн саккунĕсене ĕмĕрĕхе тытăнса тăма кăларман пулин те, хресченсемпе ĕçлеkенсем çапах вăл саккунсене килĕштерсе итлесе тăмаллах.

Совет влаçĕ хăй те хăйĕн саккунĕсене ĕмĕрлĕхех кирлĕ пулĕ темест, никама та ун пек шутлама хушмастi. Вĕсене вăл ĕçлекенсемпе хресченсен инттерессĕн кирлĕ пулсан улăштараттi те, пăрахăçа та кăлараттi. Акă илĕпĕр—йалхуçайстви налукĕн саккунĕ кашни çулах улшăнса пыраттi, чухăнсемпе вăтамсем валли хырăç çултан çулах çăмăлланса пыраттi. Анчах Совет влаçĕ йышăннă саккун пăрахăçа тухаччен хресченпе ĕçлекен халăх ăна килĕштерсе итлесех тăраттi, мĕншĕн тесен ку саккунсене помешчиксемпе пуршуйсем мар шутласа кăларнă, вĕсене кăлараканĕсем ĕçлекенсемпе хресченсем хăйсемех—ку пĕр йенчен; тепĕр йенчен—хресчен пурнăçĕпе ирĕкне йе унăн хуçайствине никамта—ахаль çын та ĕçлĕçын та, сăтăр тума пултарманнине курсан çеç вăл лăпкăн хăйĕн хуçайствине тĕреклетесшĕн ĕçлеме пултараттi. Кашни çыннăнах хуçайстви тĕреклĕ пулсан—пĕтĕм респуплĕкĕн хуçайстви те тĕреклĕ пулаттi. Ĕçлекенсемпе хресченсен пурнăçа кирлĕ саккунĕсемшĕн советăн проккурорĕсен сыхă тăмалла.

**Револютсилĕ саккунлăх патне епĕр улпутсемпе пуршуйсен контр-револютсине çĕнтерсе çеç çитрĕмĕр.**

Ĕçлекенсемпе хресченсене револютсилĕ саккунлăха тумашкăн çăмăлах пулмарĕ. Патша йĕрки вăхăтĕнче, улпутсемпе пуршуйсем пуç пулса тăнă чухне йалта револютсилĕ саккунлăх çинчен пĕр сăмах та пулин

каламалла пулнăши? Патша вăхăтĕнче те саккунлăх пулнă, патшан проккурорĕсем те пулнă. Анчах вăл саккунлăх чуралăхпа тарçăлăха сыхламашкăн çеç пулнă, улпутсен пĕчĕк ушкăнĕн инттересĕшĕн темĕн чухлĕ мелйун хресчен халăхне çĕрсĕр тытса вĕсене ĕçлеттерсе усă курма çеç кирлĕ пулнă; вăл—çемски начаљниксемпе улпутсен саккунлăхĕ пулнă.

Ун пек „саккунлăх“ вăхăтĕнче хресчене мĕн тери аван (тутлă) пулнине ĕнтĕ кашни çынах пĕлет.

Анчах ĕçлекенсемпе хресченсем пĕр патшапала пуршуаçин влаçне пĕтерсе пăрахнипех револјутсилĕ саккунлăхне пурнăçа часах кӳртсе усă курма пултарайман. Ĕçлекенсемпе хресченсем пĕр шухăшлă пулса харс сиксе тăрса икĕ пуçлă амăрт кайăклă патшан йĕркелĕхне пуршуаçипе улпутсен çунаттине хуçса татсан тин вĕсем хăйсен револјутсин саккунлăхĕпе усă курма май тупрĕç.

Ĕçлекенсемпе хресченсене хирĕç пĕтĕм пуршуйсемпе улпутсем хĕçпăшал тытса тăчĕç, контр-револјутси пуçларĕç, вĕсене пĕтĕм тĕнчери капиталçăсем пулăшрĕç. Çурçĕрпе кăнтăр йенче те, хĕвеланăçĕпе хĕвелтухĕç йенче те краштан вăрçин фрончĕсем пуçланса кайрĕç; фронтсем хыçĕнче те пĕр контр-револјутси сакăварĕ хыççăн теприйĕ сиксе туха пуçларĕ.

Акă ĕнтĕ пĕтĕм респуплĕк пĕр пысăк вăрçă лакăрĕ йевĕрлĕ пулса тăнă çав тери йăвăр вăхăтра, револјутсилĕ саккунлăх пулса,—çĕр, вăрман т. ы. саккунсем кăларса кашни çынăн тивĕçлĕхĕпе ĕçлĕçынсем мĕнле ĕçлесе тăмаллине, пурлăхсене сыхлас тĕлĕшĕнчен кирлĕ саккунсене кăларасси çинчен шухăшлама та йăвăр пулнă.

Вăл вăхăтра револјутсилĕ саккунлăха тăвас тени—çунакан çуртра пукансĕтелсене (тенкелсене) вырнаçтарса лартни пек çеç, йе кантăксене çуса тасатнă йевĕрлĕ çеç пулнă пулĕчĕ.

Ваттисем каланă—„Тупăсем ахăрнă вăхăтра—саккун шарламасть,“ тенĕ.

Контр-револјутсине хирĕç мĕн пур выйпа тăрса хăвăртрах çĕнтерес шухăш çакăн йеннелле хытăрах тилмĕрсе пăхма памарĕ. Контр-револјутсине сутпа сак-

кун мар, вăрçă вăхăтĕнче кирлĕ майсем (чресвычайни комиççи, хĕрлĕ террор) çеç çĕнтерме пултарчĕ.

Вăрçă вăхăтĕнчи йăвăр пурнăç кашни çынна кирлĕ тивĕçлĕхсемпе йĕркесене малтанах кăтартса пама май памарĕ. Хресченпе ĕçлекен тăшмана çĕнтерес тĕлĕшпе ыран мĕн кирлине мĕн тумаллине те пĕлме пултарайман. Лăпкăн ĕçлесе хуçайствăна хăпартассипе револьутсилĕ саккунлăха тăвасси улпутсемпе пуршуйсен контр-револьутсине çĕнтерсен çеç çитме пултарчĕ. Ĕçлекенсемпе хресченсем пĕрлешсе маттур тăнипе епир вĕсене çĕнтертĕмĕр те револьутсилĕ саккунлăхĕн çулĕ уçăлчĕ.

Совет влаçĕ çакăн хыççăн вара йĕркипе саккунсем кăларса, кашни ахаль çынна харпăр ĕçлĕçынăн тивĕçлĕхпе ĕçлес майне кăтартса пачĕ.

Советăн саккунĕсене итлесе вырăна кӳртнине сыхласа тăмашкăн Советăн проккураттурĕне туса хучĕ.

**Йалтан пыракан шалăпăсене асăрхаса тăрса йалта револьутсилĕ саккунлăха çирĕплетмешкĕн проккураттурă пулăшаť. Мĕнле шалăпăсемпе проккурор патне пымалла.**

Вырăнсенчи проккурорсемпе тĕпри проккураттурăна темĕн чухлĕ—çĕршер пин тĕрлĕрен шалăпăсем пухăнаççĕ. Проккурорсем пыракан шалăпăсене виттĕр пăхса тăраççĕ, мĕншĕн тесен, вĕсене çавăнпа лартнă. Çав шалăпăсенчен вĕсем тĕрлĕрен усал ĕçсемпе саккунсăр ĕçсем туни çинчен кураççĕ. Шалăпăпа йе мĕнле те пулин сăмахçемпе пыракан кашни çын вальйийех проккурорăн алăкĕ уçă, кашнийех унта пыма пултараť. Пуринчен ытла ĕçлекенсемпе хресченсен, тата хĕрлĕ салтаксен шалăписене пăхаççĕ унта.

Çыру пĕлмен ĕçлекенпе хресченшĕн шалăпă хут çине çырса канçĕрлетес мар тесе, проккурорсем хут çине çырнă шалăпăсене çеç мар, сăмахпа каланă шалăпăсене те йышăнаççĕ. Вăхăт çитнĕ майĕпе проккурорсем ĕçлекенсемпе хресченсен шалăписене пĕлмешкĕн хапрăк-савăтсене, вулăссемпе йалсене кайаççĕ. Проккурор патне пыракан хресчене кĕлмешкĕн çăмăлтарах пултăр тесе, хуласене нумай халăх пухăнакан пасар

кунĕсенче хресчен çурчĕсенче, йе урăх çавăн пек вырансенче йурийех тешурнисем пулкалаççĕ.

Халђ уйессенче проккурорсен пĕрер помошнĕк çеç. Укçа мĕн çителĕклĕ пулсан малашне пысăкрах уйессенче икшер помошнĕк лартма та шут пур, апла пулсан вара вĕсем час часах вулăссемпе йалсене çӳресе йалсенчи тĕрлĕрен усал ĕçсемпе саккунсăрлăхсене хирĕç тата хытăрах кĕрешме пултарĕччĕç.

Кĕскен каласан Совет влаçĕ пекех халĕ проккураттурăн умĕнче те чи малта тăракан—йал йенелле витĕртерех пăхасси, йалăн шалăписемпе ыйтăвĕсене итлесси. Сăмахран каласан, проккурорсен йалсенче çакăн пек ĕçсем тăраççĕ: унăн час часах йалсенче пулса, хресченсем пĕлмелли саккунсем çинчен вĕсене ăнлантарса памалла, саккунсем çинчен канашсем памалла, вырăнсенчи исполкомсен, йалти советсен, милитсисен, çлетăвăттĕлсен, çĕр комиççисен т. ы. оркăнсен ĕçĕсене саккунлăх йенчен тĕрĕслемелле, тĕрлĕ аташса (ашкăнса) çӳрекен—хуликансемпе, лаша—вăррисемпе пантитсемпе кĕрешмелле, хресченсен пĕр пĕрне пулăшакан комитетсемпе, тата йалкорсемпе çыхăнмалла, куланайа тĕрĕс йеркеллĕ пухасса, тата советсене суйламашкăн пулăшмалла, чухăнсене кулаксем пусмăрласа илесрен хăтармалла.

Мĕнле шалăпăсемпе хресчен проккурор патне пыма пултарать? тесе ыйтсан, çакна çех каламалла: **проккурор кирек мĕнле шалăпăна та йышăнса пăхать**, шалăпине урăх çĕре йамалла пулсан—ăçта, кама памаллине те каласа, ăнлантарса парать, йе хăйех кирлĕ çĕре йама пултарать.

Паллах ĕнте, кама та пулин кӳршĕ (пускил) çынни кивçен илнине тӳллемест пулсан, упăшкипе арăмĕ уйăрласшăн пулсан, т. ы. çакăн пек ĕçсем сиксе тухсан тӳррех сута каймалла ыйтăвсемпеле, йе тата тӳррех исполкома йе çĕр комиççине каймалли ыйтăвсемпе хăш чух проккурор патне çӳресе вăхăт та иртермелле мар. Курнă, пĕлнĕ преступленисем çинчен хресчен çывăхрах çлетăвăттĕле йе милитсине çеç систермелле.

Епир кунта хăçан проккурор патне каймаллине кĕскен çеç кăтартăпăр. Вĕсем çакăн пек ĕçсем: пĕр

çлетăвăттĕлне шанмасăр ун вырăнне ĕçе тĕприн аллине памалла пулсан. Çлетăвăттĕл, милитси йе тата çĕр комиççинче ĕçсене вăрахăн тăваççĕ пулсан. Саккунсăр тытса хупнипе ухтару туни çинчен. Хупса лартнă çынна тĕрмерен кăларасси çинчен. Хăш-пĕр çын вçаткă илни çинчен, йе ытти усал ĕçсем туни çинчен, вырăнта вăл ĕçсем çине çителĕклĕ пăхасса шанмалли çук пулсан. Çлетăвăттĕлĕн ĕçĕсем çинчен каламалли шалăпă. Саккунсăр ирĕксĕр ĕçлеттермелле туни çинчен, йе кирлĕ мар хырăç-марăç пуçтармалла туни çинчен. Тĕрлĕрен пусмăрлă (капалънăй) килĕшӳсем (çтелкăсем) çинчен. Çĕр виçнĕ вăхăтра чухăнсемпе вăтамсен инттересне хирĕç кайакан тунă усал ĕçсем çинчен.

Йе тата, калăпăр, саккуна хирĕç кайакан опесаттĕлни постановлени кăларни çинчен, тата кирек мĕнле пурлăха йе йапалана саккунсăр туртса илмелле (конфискатси, реквиçитси) туни çинчен пĕлтермелле пулсан. Сут йе çĕр комиççийĕ пăхса татнă ĕçсене çĕнĕ сăлтавсем тупăннă майĕпе тепĕр хут çĕнĕрен пăхмашкăн ыйтмалла пулсан. Хĕрлĕ çарта пурăнакансене йе вĕсен çемйисене йалхуçайстви налокĕ пухнă чухне саккун кăтартса панă çăмăллăхсене (лъкоттăсене) паманни çинчен пĕлтермелле пулсан. (Çакăн пек ыйтăвсем çинчен тӳррех проккурор патне пымалла, куçаракан).

Паллах ĕнте, кунта ун пек ыйтăвсене пурне те кăтартса пама май çук. Анчах, акă çакна вара нихăçан та манма йурамаст:

1) Шалăпă парас пулсан, тĕплĕн, аван пĕлсе тăнă ĕçсем çинчен çеç памалла. Мĕншĕн тесен кам та пулин тепĕр çынна пĕлсе тăрсах суйа суйса кирек мĕнле преступленипе айăплама шутлат пулсан, саккун суйа пĕлтерекене айăплат. Паллă, кам та пулин усал ĕçĕ вуçах пулман та пулсан, йе вăл пулнă пулсан та ăна тăваканĕ кăтартса панă çын мар, урăх çын пулсан, ирĕксĕр йăнăшакан çын ăйăплă пулма пултараймаст.

2) Кам çинчен проккурора шалăпă памалла? Совет саккунне итлемесĕр хирĕç кайакан çын кирек кам пулсан та, ахаль çыни вăл йе ĕçлĕ çыни—пурпĕрех ун çинчен проккурора пĕлтермелле. Коммуниссен парттипе Совет влаçĕ тĕрлĕрен йурăхсăр, терĕс кăмăллă

мар çынсенчен пĕрмайах хăйсен хушшинчен тасатаç-çĕ. Кам пĕлмест ĕнтĕ, Совет влаçĕ тĕрлĕ йурăхсăр çынсене, хытхурасене тăпăлтарса пăрахнă пек, кăларса пăрахса, советăн аппарачĕсенче айалтан пуçласа çӳле çитичченех аван, тĕрĕс ĕçлекен çынсене лартса, хăйĕн хăватне тĕреклетесшĕн тăрăшнине.

Акă, сăмахран каласан, Пĕтĕм Совет Респуплĕк-сен Сойусĕнчи Коммуниссен парттин 12-мĕш сиесĕ ун пирки йышăннă постановлени:

„Вырăнсенчи Советăн оркăнĕсенче тĕ-рĕс вăхăтлă ĕçсене тумашкăн пĕрмайах тăрăшмалла. Куланай йĕркипе тухакан ху-шусене вăхăтра вырăна çитерменни, çĕр виçсе йĕркеленĕ вăхăтра йе çĕр пирки тавлашăва пăхнă чухне ĕçе вăраха йарса чăрмантарса тăрса ĕçлени, ĕçсе ӳсĕр çӳре-ни, вçаткă пани-илни тата ытти советăн аппарачĕсенчи йĕркесĕр ĕçсем пирĕн тăш-мансен аллине пире хирĕç тăта хăватлă оруши параççĕ. Ĕлĕк патшан чуралăхлă вă-хăтра ĕçе туса тăма вĕреннĕ пек пирĕн со-вет аппарачĕсенче ĕçлесе, хресченсемпе ĕçлекенсен сойусне çирĕплетме чăрмантар-са тăракансене шыраса тупса, совет аппара-чĕсенчен хăваласах кăларса йарассипе вĕ-сене халăх умĕнче сут тăвасси—парттипеле Совет влаçĕн умĕнче тăракан чи пысăк са-таччă. Кунсăр пуçне партти тепĕр йенчен тата Совет влаçĕн кĕçĕнрех аппарачĕсенче аван ĕçлекен çынсене пĕрмай пулăшса тă-рать“.

3) Проккурор кашни шалăпă параканах çав вă-хăтрах татса калама пултараймасть. Хăш пĕр шалăпă тăрăх тĕрлĕрен справкăсем пухма кирлĕ пулать, йе та-та ун пирки йурийех тĕпчесе пĕлме те кирлĕ пулать, вăл ĕçе тумашкăн вăхăт кирлĕ. Паллах ĕнтĕ, çавăн пек вăхăтра проккурор вăрахăн ĕçлеть тесе ӳпкелени тĕрĕс мар. Анчах çапах та проккурор ĕçе вăраха тăвакан-семпе хытă кĕрешмелле.

**Йалта Советӑн саккунӗсем ҫинчен пӗлессине проккураттурӑ пулӑшаҭ.**

Кирек мӗн ҫинчен те пулин ӑҫта, кам патне пырса пӗлмелли пулсан, йалтан пынӑ хресчен вӑхӑчӗ кӑлӑхах ан ирттӗр, тата вӑл хӑвӑртрах хӑйне мӗн кирли ҫинчен йӗрке тупса пӗлтерме пултартӑр тесе, проккураттурӑ йалта та хулара та саккунсем ҫинчен укҫасӑрах ӑнлантарма йе пулӑшма тӑрӑшаҭ. Хаҫат—кӗнекесем вуламалли ҫуртсенче мӗн кирлине хресчен йӗркине шыраса тупма пултартӑр, тесе, проккурорсем вуламалли ҫуртсене саккунсем ҫинчен ҫырнӑ кӗнекесене, шурналсене салатма тӑрӑшаҫҫӗ, тата унта ӗҫлекенсем ваљђи хресчен ҫыннине кирлӗ тӗрлӗ ыйтӑвсем ҫинчен ӑнлантарса вӗрентмешкӗн вырӑнӗ-вырӑнӗпе курӑссем тукалаҫҫӗ.

Кӗскен каласан проккурор йалсене советӑн саккунӗсем ҫинчен пӗлессине сарма тӗрлӗ майсемпе тӑрӑшаҭ.

Час—часах хресченсен ҫырӑвсенче саккунсем ӑнланмалла мар, пӑтранчӑклӑ тата вӗсем пӗлме йӑвӑртарах тени палӑраҭ. Чӑнах хресчене час—часах килйышӗпе килҫурт тавраш валеҫес йӗркесене кӑтартса панӑ саккунсене, тата йалсен тивӗҫлӗхӗсӗне кӑтартса тӑракан саккунсене ӑнланма, ҫӗр виҫсе валеҫес йӗркесемпе йе тата куланайсем ҫинчен ҫырнӑ саккунсем пӑтранчӑк пирки вӗсене ӑнланма йӑвӑр.

Ҫавӑнпа Совет влаҫӗ саккунсене кашни ҫыннах ӑнланмалла пултӑр, тесе ҫырма тӑрӑшаҭ те анчах ҫавах та хутла начартарах пӗлекеншӗн пулсан вӗсем ӑнланмаллах пулмаҫҫӗ, ҫавӑнпа сӑмахпа каласа ӑнлантармалла пулаҭ.

Час—часах тата йалсенче хӑш—пӗр саккун пуррине пӗлмесӗрех тӑрса йулаҫҫӗ; ун ҫинчен вулӗҫтӑвкомӗ те, йалсовечӗ те пӗлмест, хресчен ҫынӗ пуринчен ытла хутла пӗлмен чухӑн ҫынӑн ӑна пӗлме тата йӑвӑртарах.

Йалсен пурнӑҫне сӑнаса вӗренсе ҫӳрекен пӗр Йаккӑвлӗв йулташ ҫапла ҫыраҭ: „Начарсенчен пит нумайӗшӗ халичченех хӑйсен тивӗҫлӗхӗсем ҫинчен

пĕлмеççĕ. Саккун панă çăмăллăхсем вĕсен патне, сахалтан пулсан та, çури те çитеймеççĕ“ тет вăл.

Совет саккунлăхĕ çинчен чухăнсемпе вăтамсем пĕлмен майĕпеле чухăнсене сăтăракан вăрттăн ваккатсемпе кулаксем усă кураççĕ.

Ун çинчен пĕр халăх сутйи акă мĕн çырат:

„Манăн нумай районсенчи халăх сучĕсене ревиçи туса çўремелле пулчĕ, вĕсенче епĕ тарçăсем ĕçленĕшĕн хуçисенчен, хĕрарăмсем ачипăчисене тăрантарса ўстермешкĕн ашшĕсенчен, кĕтуçсем тата прислукăсем хăйсене тивĕçлине шыранине тĕл пулмарăм. Ăна курса епĕ—йалта пурнăç тикĕс, пит аван, пусмăрлакансем те çук пусмăрлăха тўсекенсем çук иккен тесе шухăшланăччĕ. Анчах епĕ йăнăшнă иккен. Пĕр района курса ĕçсене йышăнсан епĕ ун пек ĕçсем пĕрре те кураймарăм. Çак мана вара шухăша йачĕ—йалсенчи пурнăç сут камăрĕнчи ĕçсем пекех мар пулĕ, терĕм; чăнахах та вара нумайах та вăхăт иртеймерĕ манăн шухăшсем тĕрĕссине куртăм. Хамăн капинетран тухса йалсене хресчен халăхĕ хушшине кайсанах тĕрĕслĕхе картласа тăракан чул вырăнтан тапранчĕ. Чухăнсемпе пăртакçă калаçса пăхсанах районра темиçе çĕр тарçăсем кунăнçĕрĕн, выççăн пĕр пус укçасăрах, пĕр йасмăк йашкишĕнех тенĕ пек, тĕртленсе пурăннине сисрĕм. Темиçе çĕр намăсланса, тăлăхланса йулнă хĕрарăмсем сут тăрăшнă пирки сут пурри çинчен, тата вăл вĕсен хутне кĕнине пĕлчĕç, Совет влаçĕ сута мĕншĕн йала лартнине, тата Ĕçлекенсемпе Хресченсен правитељстви кăларакан вĕсен хутне кĕрекен саккунсем çинчен илтрĕç те, вара вĕсенчен хўтлĕх шырама халăх сутне çўреме пуçларĕç“.

Çакăнтан ĕнтĕ паллă Советăн саккунĕсене пĕлнине хресчен халăхĕ хушшине салатни мĕнтери кирли; ку ĕçе пĕтĕмпех пĕр проккураттурах тума пултараймаст, вăл ăна мĕн вăй çитнĕ таран пулăшат. Советăн саккунĕсем хресченсене мĕнле тивĕçлĕх панине паллаштармашкăн йалсенчи вĕреннĕ çынсен пурин те ăна пулăшма кирлĕ.

**Йалта револ̧утсин саккунлӑхне ҫирӗплетмешкӗн проккурора пӗр шалӑпӑсем ҫеҫ мар, хаҫатсем ҫинче ҫырса пӗлтерни те пит нумай пулӑшат̆.**

Револ̧утсилӗ саккунлӑха пӑснипе кӗрешес ӗҫре пирӗн хаҫатсем те пит пысӑк усӑ кӳреҫҫӗ.

Савӑтсемпе хапрӑксенче усал ӗҫсем туни ҫинчен ӗҫлекенсен корреспонтечӗсем (ӗҫкорсем—хаҫатсене ҫыракансем—к у ҫ а р а к а н) пӗлтереҫҫӗ, йалсенче пулни ҫинчен—йалкорсем ҫырса пӗлтереҫҫӗ.

Йалсемпе хуласенчи ӗҫлекенсен инттересӗсемшӗн вӗсем час—часах хӑйсен сӑннисене вирлӗ йарса тӗрӗс тӗлех ленктереҫҫӗ.

Вӗсен сӑннисем ленкмен кӗтес пирӗн тӗрлӗрен халӑх пурнакан Совет Респуплӗкӗнче ҫук та пулӗ. Кулаксен пусмӑрлӑхӗ айӗнче тапранма пултарайман чухӑнсем хӑйсене Совет саккунӗсем тата тивӗҫлӗхсемпе ҫӑмӑллӑхсене пӗлеймесӗр (чухлаймасӑр) йулнӑ вӑхӑтра, кулаксем чухӑнсен тӗттӗмлӗх майӗпе хӑйсен пуҫӗсене ҫӗклесе копперативсенче, йалсовечӗсенче йе ҫӗрйӗркеленӗ чухне саккунсӑр ӗҫсем туни ҫинчен ӗҫкорсемпе йалкорсен сӑннисем хырӑмӗсене сарса йанӑ халӑх йунне ӗмекен кулаксен лӑпкӑн пурнӑҫне хускатса, чухӑнсемпе вӑтамсен шухӑшне вӑратаҫҫӗ.

Вҫаткӑ парӑссипе илесси, ӗҫлӗҫын тивӗҫсӗр ӗҫсем туни, сӑмакуншчӑксемпе пантитсене шеллесе тӑни, тӗрлӗрен саккунсӑр куланайсем пухни, хуҫайствӑра йапӑх ӗҫлени, ӗҫлекенсемпе тата хресченсемпе мӑннӑн пулни, вырӑнсенчен йӗркесӗр кӑларса ывӑтни, ӗҫе вӑраха тӑсни тата револ̧утсилӗ саккунлӑха пӑсса тӑнине ӗҫлекенсен инттересӗсене пит сийенлекен йӗркелӗхсӗрсем ҫинчен йалкорсемпе ӗҫкорсем кӑтартса парса, хаҫатсем урлӑ пире пӗлтереҫҫӗ.

Ҫавӑн пек пӗлтернисем ҫине проккурорсем витӗр пӑхса тӑраҫҫӗ, вӗсем тӗрӗс пулсассӑн айӑплисене саккун хушнӑ пек сут умне тӑратса айӑплама тӑрӑшаҫҫӗ.

Хаҫат ҫинче ҫырса саккунсӑр ӗҫсем ҫинчен пӗлтернӗшӗн ӑна хӗстерме пуҫласан проккурор кирек хӑҫан та ун майлӑ пуласса, ӑна хута кӗрессе шансах тӑмалла.

**Йалта саккунлăха сыхласа, проккурорăн вырăнти ĕçлĕçынсен тĕрлĕрен саккунсăр хушусенчен хресченсене сыхламалла.**

Шалăпăрани йе ыйтуран, хаçат çинчен пĕлтернинчени йе урăх кирек мĕнле майпа вырăнти влаç саккунсăр хушусем кăларнисене пĕлсен, проккурорăн ун пек хушусене хирĕç протест памалла.

Вырăнсенчи (кĕпĕрнесенчи, уйессенчи, вулăссенчи тата йалсенчи советсене) ĕç тăвакан комиттетсене Совет влаçĕ пысăк ирĕк панă. Халь тата нумайах та пулмаст вулĕçтăвкомсемпе йалсоветсен тивĕçлĕхне пысăклатнă. Совет влаçĕ ăна, пĕр йенчен—пĕтĕм хресчен халăхне (кулаксене мар—куçарак.) патшалăх ĕçне тутармашкăн, тата вырăнсене хăйсен патĕнчи ĕçсене тума пысăк ирĕк пултăр, тесе парат; тепĕр йенчен Совет респуплĕкĕнче вырăнтипе тĕпри ирĕк хирĕç пыма пултараймаççĕ, мĕншĕн тесен ку та вăл та пурпĕрех ĕçлекенсемпе хресченсен влаçĕ, унăн мĕн пур шухăшĕ те ĕçхалăхĕн инттересĕсене сыхласси.

Вырăнсенчи (вулăссенчи, уйессенчи, кĕпĕрнесенчи) ĕçлекенсемпе хресченсен тепутачĕсем советсен сйесĕсем, сйеспа сйес хушшинче ĕçлесе тăракан ĕçтăвкомсем (вулăссенчи, уйессенчи, кĕпĕрнесенчи), тата йалсовечĕсем хăйсен йалĕсенче, вулăссенче, уйессенче, кĕпĕрнесенче вырăнсенчи влаçĕн пысăк оркăнĕсем пулса тăраççĕ; вĕсем кăларнă постановленисене, хушусене пур унта пурнакан халăхăн та, тĕпри влаçĕн саккунĕсем пекех, пăхăнса итлесе тăмалла.

Анчах çавах та вырăнсенчи ĕçтăвкомĕсемпе сйессем те, ĕçтăвкомсен пайĕсем йе вырăнсенчи влаççен харпăр ĕçлĕçыннисем пекех, тĕпри влаçăн (Пĕтĕм Раç. Ĕç тăвакан тĕп комит., халăх комиссарсен канашĕн, халăх комиссариачĕсен) саккунĕсене те хушусене те улăштарма та, пăрахăçа кăларма та пултараймаççĕ.

Саккуна хирĕç кайакан постановлени тухсан проккурор хăй ăна чарса тăма пултараймасан та çавăнтах вырăнти аслă влаç умĕнче проттеслемелле; проккурорăн проттестне ахалех хăварсан вара ĕçе тĕпĕçтăвкомăн преçитиумĕ патне йамалла.

Çапла вара проккураттурă хресчене тĕрлĕрен саккунлăхсăрпа йĕркесĕрлĕхсенчен сыхласа тăрат.

Сăмахран, тĕрĕс мар хунă штрафа, саккун кăтартман куланайа йе урăхла ирĕксĕр пуçтарăва, кирек мĕнле йапаласене йе пурлăха саккунсăр туртса илсен (конфискатси, реквиçитси), тытса хупса лартсан тата урăх çакăн пек саккун кăтартман постановленисене пăрахăçа кăлармашкăн тăрăшат̆. Кĕскен каласан, пуринчен ытла проккурорăн чухăнпа вăтамăн инттересне тивекен саккунсăр постановленисемпе ĕçсем пулнине асăрхаса тăмалла, вĕсене чармашкăн тăрăшмалла.

Проккурор саккунсăр кăларакан постановленисене проттестлени çех мар, вăл саккунсăр постановленисене йышăнма та чарса тăрат̆. Çавăнпа проккурор ĕçтăвкомсен, тата ытти оркăнсен саççетанисенче те пулма пултарат̆. Саççетанисенче пулса вăл тĕрлĕрен ыйтăвсене саккун кăтартнă майпа кăларма пулăшат̆. Нумай вырăнсенче паллăрах прикассемпе постановленисен проекчĕсене пăхса вĕсене саккунлăх тĕлĕшĕнчен асăрхаса тăрат̆. Çапла каллех вăл саккуна хирĕç пыракан постановленисем кăларма чарса тăрат̆.

Проккурор сутсем, çĕр комиççисем ĕçсене саккун кăтартнă пек татса паманнисене хирĕç пулса проттестлет, анчах вăл проттессене ĕçтăвкомсене мар прикăвăр тунă сутĕнчен аслăраххине йарат̆ (кĕпĕрнери сута, Аслă сута, кĕпĕрнери çĕркомиççине т. ы.). Вырăнсенчи ĕçтăвкомсем сутăн прикăвăрĕсене пăрахăça кăларма пултараймаççĕ.

Хутран-ситрен сайра пулсан та ĕçлекенсемпе хресченсем майлă пултăр тесех кура—тăрах саккуна хирĕç ĕçсем тукаламалла пулат̆. Калăпăр сăмахран—пĕр—пĕр тиншара (шыв тулни, вуткăвар сарăлни т. ы.) тухнă пирки, халăха йе халăхăн пурлăхне çăлас тесе, нимĕне пăхмасăр хăвăрт мĕн кирлĕ ĕçе тумалла. Çавăн пек вăхăтра проккурор, ĕçхалăхĕн инттересне асăрхаса тăрса, саккуна хирĕç кайакан ĕçсене хирĕç тăмаст̆, анчах ун пек ĕçсем çинчен хăвăрт тĕпри влаçа (хăйĕнчен аслă проккурора) пĕлтермелле.

Проккурор саккуна хирĕç кайакан постановленисене хирĕç пулса проттест пани—вăл йалти халăхшăн пит паха ĕç.

Хресченĕн мĕн пур ĕмĕрĕ тенĕ пекех пĕр çуралса ӳснĕ вырăнтах иртсе кайат̆, унта вăл пурăнат̆,

унтах вилсе те кайат̌. Кунта унӑн ҫемйи те, хуҫайстви те, ӑна кирлӗ орканисатсисем те унтах, хырӑҫ—марӑҫне те вӑл кунтах тӳллесе пурӑнат̌, ытти ӗҫсене те вӑл ҫак пӗр вырӑнтах туса иртерсе пурӑнат̌. Ҫакӑнтан паллӑ ӗнтӗ—кашни хресченшӗнех хӑйӗн ӗмӗрне иртерсе йанӑ ҫӗршывра йӗркеллӗ, сыввӑн, лӑпкӑн хӑйӗн хуҫайствине кирлӗ ӗҫсене туса тӑрасси пит паха, вӑл ӑна кирлӗ. Йалсенче револютсилӗ саккунлӑха пӑснипе проккураттурӑ кӗрешни хресченсене пит пысӑк пулӑшу кӳрет.

## Хӑрушӑ усал ҫынсемпе преступниксенчен тасатмашкӑн йала проккураттурӑ пулӑшат̌.

Тӗрлӗрен хӑрушӑ усал ҫынсем, преступниксем—лаша-вылӑх вӑррисем, пантитсем, сӑмакунщчиксем, хуликансем т. ы. йала мӗн тери пысӑк сийен тунине кашни ҫынах ӗнтӗ пӗлсе тӑрат̌. Проккураттурӑн ҫавӑн пек усал елементсемпе (ҫынсемпе) кӗрешмелле.

Преступниксенчен сийен курнӑ ҫын пӗлтернӗ хыҫҫӑн ҫеҫ мар, проккурор хӑйех ун ҫинчен илтсен преступнике хирӗҫ ӗҫ тапратса йарат̌, хӑрушӑрахисене тытса тӗрмене хупма та хушат̌.

Чӑннипех, преступленисемпе пӗр проккураттурӑ ҫеҫ мар кӗрешет. Вӑл ӗҫе пӗр оркӑнах тума пултараймаст̌. Преступленисемпе милитси те, уколовнӑй росыск та, ҫлетӑвӑттӗлсем те, сут та кӗрешет.

Анчах преступленисемпе кӗрешесси йалта та хулара та калкал, ӑнаҫлӑ пытӑр тесен, ҫав оркӑнсен пурин те пӗр шухӑшлӑ пулса ӗҫлемелле. Вӗсен преступленисемпе кӗрешес ӗҫе проккураттурӑ пӗтӗҫтерсе, пӗрлештерсе тӑрат̌.

Ҫавӑнпа вӑхӑчӗ вӑхӑчӗпе кӗпӗрнери проккурор патӗнче те, уйесри проккурор патӗнче те кирлӗ оркӑнсенчен ҫынсем пухӑнса, преступленисемпе мӗнле йӗркепе кӗрешмелли ҫинчен калаҫаҫҫӗ, пуринчен ытла мӗнле вырӑнта ӗҫлекенсемпе хресченсене сӑтӑр тӑвакан преступленисене хирӗҫ мӗнле майпа кӗрешмелли ҫинчен план тӑваҫҫӗ.

5886

**Преступленисемпе кĕрешесси йĕркеллĕ, саккунлă пултăр тесе, проккурор вĕсене тĕпченĕ чух асăрхаса тăрать.**

Ку анчах мар-ха. Проккурор преступленисемпе кĕрешекен оркăнсен ĕçĕсене пĕрлештерсе тăрассинчен пуçне, вăл тата çав кĕрешӳ тĕрĕс, саккунлă пултăр тесе асăрхаса тăрать.

Калăпăр—çынна вĕлернӗ, çаратса йе вăрласа кайнă йе вут кăвар тивертсе йанă, кĕскен каласан кирек мĕнле пулин те преступлени пулнă.

Паллах ĕнтĕ, нимĕн тĕпчемесĕрех айăплă çынне сут умне тăратмашкăн ĕçне сута йама май çук.

Чи малтан ак çаксене тĕпчесе пĕлес пулать—айăплă çынни кам, сийен курнине, тата çвитеттĕлсене ыйтас пулать, кирлĕ пулсан преступлени пулнă вырăнне те кайса пăхас пулать, айăплă çынне вăл тарса йе пытанса çӳрет пулсан, ăна шыраса тупса тытас пулать, вăрласа йе çаратса кайнă йапалисене тупса хуçине каялла тавăрма тăрăшмалла, т. ы. çавăн пек нумай ĕçсем пулма пултараççĕ. Тата тепĕр йенчен çапла та пулма пултарать—чи малтанах преступлени тунийĕ нимĕн айăпсăр çын çине укнĕ, ăна вара хăй айăпсăррине кăтартса памашкăн май парас пулать. Преступлени тăваканĕ чи малтанах тупăнсан та хăш-хăш чухне пур-пĕрех—мĕншĕн вăл ун пек усал ĕçе тунине, мĕн сăлтав унта пулнине пĕлес пулать, мĕншĕн тесен çавна пĕлнинчен айăплă çын çине мĕнле пирĕн пăхасси курăнать. Калăпăр, ĕçлекен йе хресчен хăйĕн тĕттĕм майĕпе, пĕлмен пирки, йе шайсăр нуша пулнипе йе тата унăн пурнăçĕ ытла йăвăрланса çитнĕ пирки преступлени тунă—кун çине епĕр пĕр майлă пăхатпăр; кунтан ăраснах вара—усал ĕçе тума хăнăхнă çын преступлени тунă пулсан, йе ĕçлекенсемпе хресченсен интересне хирĕç кĕрешекен пуршуаçипе помешчиксен çынни преступлени (сăмахран, револютсине пĕтерме каварлашса тунă пулсан, кун çине епĕр урăхрах пăхатпăр.

Татса каласан, кашни çавăн пек усал ĕçпелех ĕçне сута йаратчен чи малтан тĕпчесе йĕркине тупмалла. Пĕчĕкрех ĕçпеле ăна милитсине йе уколовнăй росыска хушаççĕ, пысăкрах ĕçпеле—çлетăвăттĕле йе патшалăхри политтик тытăмне (Г.П.У.) хушаççĕ.

Хресчен преступлениren сийен курни, йе урăхла—ăна айăплă çын вырăнне туртаççи, пурпĕрех паллă ĕнтĕ ĕçлекеншĕн пекех хресченшĕн те вăл ĕç пирки тĕпчесе йĕрлесси тĕрĕс пулни паха. Çавăн пек чухне вара проккурорăн асăрхаса тăмалла. Айăплă çынсене, йе вĕсене пулăшса тăракансене (сăмахран—çынна вĕлерекене, вăрхурахсене) йе тата вăрласа кайнă йапаласене тупас йенĕпе, тĕпчесе пĕлни тĕрĕс çулпа, никамăн майлă та пулмасăр, ĕç темиçе уйăх чăсăлса ан пытăр тесе, чăн айăплисене тупса айăпсăррисем ахалех сийен ан курччăр тесе, тата сийен куракана çлетăвăттĕл преступлениren курнă сийене шырама пултарнине ăнлантарса памалла; кирлĕ пулсан çлетăвăттĕлĕн хăйĕннех сийен курнă çыннăн шырамаллине сутченех паллă туса хумалла; çлетствипе тоснани (тĕпчени) саккун кăтартнă пек йĕркеллĕ пымалла; çаксем тĕрĕс пулса пынине пĕтĕмпех проккурорăн сăнаса астуса тăмалла.

Сийен куракanĕ, айăплă çынĕ тата çвитеттĕлĕ те милитсипе уколовнăй росыск йе çлетăвăттĕлĕн ĕçĕсем килĕшмеççĕ пулсан, ун çинчен проккурора шалăпă пама пултараççĕ. Ăна пăхса проккурор кирлĕ йĕркесем кăтартса парать те, вара ăна çав малта кăтартнă милитсин, уколовнăй росыскăн тата çлетăвăттĕлĕн те пĕр иккеленмесĕрех итлесе тумалла.

Милитсирен те, уколовнăй росыскран та, çлетăвăттĕлрен те, сутран та кирек мĕнле ĕçе те проккурор илсе пăхма пултарать. Айăплă çыннăн айăпĕ чăннипех тупăнсан, çлетăвăттĕл тĕпчесе йĕрке тупса пĕтернĕ хыççăн ĕçе проккурор патне йарать.

Çлетăвăттĕлсене, милитсине уколовнăй росыскăн пуçлăхĕсемпе, унта ĕçлекенсене проккурор хăй илсе ĕçе лартмасан та, вăл хăй йенчен авантарах хутла пĕлекен тата тĕрĕс ĕçлеме пултаракан çынсене вырăна лартмашкăн пулăшса кăтартса парать; тата сутсемпе тĕпчесе тăракан оркăнсене тĕрĕс мар, йурăхсăр тата ĕçлекенсемпе хресченсене сиввĕн пăхакан киревсĕр çынсенчен тасатас ĕçе те унăн асăрхаса тăмалла.

Проккурорăн вулăссемпе районсенчи милитсисен, тата вулăссенче ĕçлесе тăракан çлетăвăттĕлсен ĕçĕсене хытă тĕрĕслесе тăмалла.

Ҫлетӑваттӗлсене, милитсипе уколовнӑй росыскра ӗҫлекенсене (пуринчен ытла хресченсемпе ӗҫлекенсенчен тухнисене) тӗрӗс ӗҫлесе, преступленисене тупмашкӑн кирлӗ саккунсене ӑнлантарса вӗрентмешкӗн проккурорӑн пулӑшса тӑмалла, вӗсене унӑн сӑмахпа калаҫса та, ҫырса та ӑнлантармалла, курӑссем, ушкӑнсем уҫма пулӑшмалла.

### Тӗрмесене хупнисене йӗркеллӗ саккун хушнӑ пек тытса тӑнине асӑрхасси.

Айӑплӑ ӗҫсене саккун хушнӑ пек йӗркеллӗ тӗпчесе пынине проккурор асӑрхаса тӑрат тесе каланӑччӗ малта. Вӑл кашни ӗҫлекенпе хресченшӗн те кирлӗ ӗҫ. Пуринчен ытла ку ӗҫре проккурор тытса хупнӑ ҫынсене тӗрмере йӗркеллӗ саккунлӑ усранине пӑхат.

Хаљ тӗрлӗрен преступленисем пулкаламашкӑн сӑлтавсем пур вӑхӑтра, хресченсемпе ӗҫлекенсене лӑпкӑн ӗҫлесе пурӑнмашкӑн чӑрмантаракан хӑрушӑ ҫынсемпе преступленисем пур чухне ирӗксӗрех Совет республӗкӗнче хупса тытса усрамалли ҫуртсем (тӗрмесем) пулмалла.

Чӑнах, укҫа-тенкӗ ҫитнӗ таран хаљхи тӗрмесем ӗлӗкхи—патша вӑхӑтӗнчи улпутсемпе пуршуйсен тӗрмисем пек ан пулччӑр, тесе тӑрӑшаҫҫӗ.

Преступниксене тӗрмесене тытса хупса, Совет влаҫӗ пӗтӗм халӑха тӗрлӗрен преступленисенчен хӑтарасшӑн, тата преступниксене ӗҫпеле кӑмӑллӑ, тӳрӗ пурӑнма вӗрентесшӗн тӑрӑшат.

Тӗрмесенче ларакансене халӗ хутла вӗрентмешкӗн темӗн чухлӗ тӑрӑшаҫҫӗ.

Анчах, хаљ укҫа-тенкӗ ҫитейменни пур ҫӗртре те шухӑшланисене пӗр пек ӗҫе кӗртме чарса тӑрат. Ҫавӑнпах тата пур ҫӗртри ӗҫпе йусакан ҫуртсенчи (тӗрмесенчи) ӗҫсем те пӗр тикӗс аван пыраймаҫҫӗ.

Проккурорӑн час-часах тӗрмесене ҫӳресе пӑхса тухмалла, унта ларакансем каласа панине итлесе, вӗсен шалӑписене тӗрӗслемелле, тӗрмери йӗркесем Совет влаҫӗ хушнӑ пек йӗркеллӗ пулччӑр, сӑмахран каласан—унта ларакансене тивӗҫлӗ апатҫимӗҫ параҫҫи, ӗҫленӗшӗн укҫа тӳлеҫҫи, ӗҫсем тупса параҫҫи вӗсене,

камăрăсенче (пӳлĕмсенче) тасаи, тухса таракансем ан пулччăр, чухăнсемпе вăтамсене пуйансенчен хĕнрех ан пултăр, тесе тата ыттисене те вăл тĕрĕслесе тăрать. Çынна тĕрмене тытса тивĕçлипе хупнине проккурор асăрхаса тăрать, никама та, пуринчен ытла ĕçлекенпе хресчене, саккунсăр тытса тĕрмене хупасран асăрхаса тăрать.

Çынна тытса хупассине—кирек мĕнле йĕркесĕр ĕçшĕн (проступок) те пур вырăнти ĕçлĕ çын та—тытса хупса лартма пултараймасть.

Мĕнле преступленисемшĕн, кам тата мĕнле йĕркепеле çынна тытса хупмаллине Совет влаçĕн саккунĕ тĕрĕссĕн кăтартса панă. Ăна Совет влаçĕ пуҫи пуҫми çынна, пуринчен ытла ĕçлекенпе хресчене ахалех йĕркесĕр хĕсĕрлесрен тунă. Акă милитсипе уколовнăй росыск мĕншĕн тытса хупма пултараççĕ:

1) преступнике преступлени тума хатĕрленнĕ чухне, преступленине тунă вăхăтра йе преступленине тунă хыççăнах тытсассăн;

2) сийен курнă çынĕ йе преступлени тунине куракансем преступникне палласа кăтартса парсассăн;

3) сăнаса илнĕ çын çинче йе ун çумĕнче йе тата унăн килçуртĕнче преступлени тунин палли (йĕрри) тупăнсассăн;

4) сăнаса илнĕ çынĕ тарма тытăнсассăн йе ăна тарнă вăхăтра тытсассăн;

5) сăнаса илнĕ çын ăçта пурăнни йе вăл ăçта ĕçлени паллă мар пулсан, тата

6) сăнаса илнĕ çынна кам иккенне ниçтан та пĕлме çук пулсан.

Çлетăвăттĕл саккун кăтартса панипе çынна пысăк преступленишĕн çеç тата преступник йе ĕçĕ çинчен йĕрленĕ чухне, йе сутран тарассинчен шикленмелле пулсан, йе тата ирĕкре пурăнса вăл ĕçĕ çинчен кирлисене (сăмахран—çвитеттĕлсене йе тата сийен курнине хăратса йе кирек мĕн сĕнсе преступлени йĕрĕсене çухатса) чăрмантарса пырать пулсан çеç тытса тĕрмене хупма пултарать. Кунсăрăн пуçне тата преступникĕ çлетстви вăхăтĕнче йе сутран тарасси шикĕ пулмасан та йе вăл ĕçĕ çинчен йĕрлеме канçĕрлемест пулсан

та, анчах унӑн преступлени пысӑк, хӑрушӑ, хӑй те ытти халӑхшӑн хӑрушӑ усал ҫын пулсан,—ӑна пурпӗрех тытса тӗрмене хупма пултараҫҫӗ.

Тытса хупни ҫинчен кирек хӑҫан та мӗн пирки хупнине ҫырса проккурора пӗлтермелле.

Патшалӑхри политтӗк ӗҫӗсене сыхласа тӑракан Управленине (Г.П.У.) ку тӗлӗшрен пысӑкрах ирӗк панӑ, мӗншӗн тесен ун аллинче пуршуаҫипе улпутсен тарҫисем тӑвакан чи пысӑк хӑрушӑ преступленисем пулаҫҫӗ.

Пирӗн саккун тӑрӑх ӗҫлекенпе хресчене пуђи пуђми ӗҫпелех тытса хупмалла мар. Ӗҫлекенпе хресчене тӗрмене хупмалла пулсан, вӑл йӗркесӗр усал, ытти халӑхшӑн хӑрушӑ ҫын йе урӑх нимӗнле те ытти халӑха унран хӑтарма май ҫук пулсан тин (калӑпӑр—лаша вӑрри т. ы.) хупса лартаҫҫӗ. Проккурорӑн ҫакна пит хытӑ астуса тӑмалла.

Тӗрмесене ҫӳресе йе кирек мӗнле урӑх майпа кама та пулин саккунсӑр хупса лартни ҫинчен илтсен, проккурорӑн ун пек ҫынна часрах ирӗке кӑларма хушмалла.

Малта кӑтартнӑ пек, хресчен, ӗҫлекен йе кирек мӗнле ҫын та пулин саккунсӑр тӗрмене тытса хупни ҫинчен проккурора кирек хӑҫан та пӗлтерме пултарать.

## Ухтарусене саккун кӑтартнӑ пек тумаллине проккурор асӑрхаса тӑрать.

Проккурор тата халӑха саккунсӑр ухтарусенчен сыхласа тӑрать. Преступниксене тупассипе преступленисен йӗрӗсене шырас ӗҫре час-часах ухтарусем пит нумай пулӑшаҫҫӗ. Вӑл йенчен пулсан ухтарусем пит кирлӗ. Ухтару пирки ҫеҫ вӑрланӑ йе ҫаратнӑ тупрасене, йапаласене, сӑмакун, тата ыттине те нумай тупкаланӑ ку таранччен. Ҫавӑнпа та милитсин, уколовнӑй росыскӑн, ҫлетӑвӑттӗлӗн тата Патшалӑхри Политтӗк Тытӑмӗн преступниксене тупас йе преступленисене йӗрлес тӗлӗшпе час-часах ухтарусем тумалли пулкалать.

Анчах, саккун кирлӗ кирлӗ мар ухтарусемпе кӑлӑхах ҫынсен лӑпкӑ пурнӑҫне канҫӗрлеме хушмасть.

Пĕр-пĕр килçуртра йе кирек кам патĕнче преступнике тупас ĕçе кирлĕ йĕр йе йапаласем тупăнмалла пек туйăнсан çеç, саккун кăтартнă тăрăх, ухтару тумалла. Пуљи пуљми çын патĕнчех пустуй ĕçпе йĕ ĕçсер ухтару тума йурамасŤ.

Ухтарусене тата кăнтарла çеç тумалла, ытла питрех васкамалла чухне çеç çĕрле тума йуратŤ. Ухтару тунă вăхăтра кирек хăçан та понеттисем, кўршĕсем пулмалла, килçурт хуçи те ухтару тунă çĕртех пулмалла. Çак йĕркене тĕрĕс итлесе ĕçленине проккурорăн асăрхаса тăмалла.

### Проккурор тата ĕçлекенсемпе хресченсен сучĕ.

Кирек мĕнле ĕçе илсен те, пĕр тоснани йе çлетстви тунипех, вăл пĕтме пултараймасŤ. Айăпли йе айăплă мари сăнава илнĕ çын, мĕн тери вăл айăплă, çаксене пĕр сут çеç татса калама пултаратŤ. Сутшăн пулин те пĕтĕм чăннине тупма йаланах та çăмăл ĕçех мар. Чейе преступник сут умĕнче хăйне айăпсăрăн кăтартасшăн тата ĕçе арпаштарса йарасшăн йе сийен курнă çынпа çвитеттĕлсем каласа панине пăрахăçа кăларасшăн темĕн те пĕр шутласа кăларатŤ, суйатŤ, ĕçе пăтрататŤ.

Акă вара мĕншĕн нумай пысăкрах ĕçсене пăхнă чухне вĕсене тĕрĕс пăхса татас тесен ĕçлекенсемпе хресченсен сутне пулăшмалла пулатŤ. Пулан чухне те преступленинчен сийен курнă çын сута мĕн кирлине калама та пултараймасŤ. Хăш чухне вăл мĕн кирлине пурне те пĕлеймест, хăш чухне хăраса тăратŤ, преступник кайран та пулин тавăрасран хăранипе, преступникĕ халăх хушшинче кирек мĕнле хăрушă çын пулин те пурпĕрех ăна каçарма хатĕр. Проккурор вара çакăн пек ĕçсем пирки сут умĕнче преступниксене айăпласа ĕçлекенсемпе хресченсен сутне пулăшатŤ.

Проккурор сут умĕнче никам майлă та мар, хăйĕн инттересĕшĕн те мар, Совет респуплĕк йачĕпе çеç тăрса айăплатŤ.

Проккурор айăплă çынна сут умĕнче айăпласси ĕçлекенсемпе хресченсене усал çынсенчен (преступниксенчен) хăтарасшăн, тата преступлени пирки сийен курнă çынна хăйне тивĕçлине тавăрса илмешкĕн пулăшни пулатŤ. Проккурор сутра кирек мĕнле пулсан

та пур чухне те айăплама тăрăшмасть. Çыннăн айăпсăрри сутра палăрсан, проккурор ăна айăплама пăрахать. Мĕнле преступлени, кам ăна тунă, пĕлмен пирки йе шайсăр, пурнăç йăвăрлăхĕ пирки, ăна ĕççынни туни, йе преступленисем тума вĕренсе тискерленсе çитнĕ преступник ăна туни, проккурор çаксене пĕтĕмпех астуса тăрать те вара айăплă çынна çăмăлтарах йе йăвăртарах айăпласа хумаллине вăл сута кăтартса парать.

Совет влаçĕн саккунĕ ĕçлекенсемпе хресченсен класслă тăшманĕсене хытă хĕстерсе тăнине, çав вăхăтрах сисмен çĕртенех айăплă тухнă ĕçлекенпе хресчене кирлĕ таран çăмăллăх панине—пур те пĕлсе тăраççĕ.

Çапла вара çынна айăпланă чухне Уколовни котекс сута ак çаксене астуса тăма хушать: 1) преступленине пуршуаçи классĕн ирĕкне калла çавăрасшăн туни, йе ăна тăваканĕ хăйĕн инттересĕшĕн çеç тунă; 2) преступлени ĕçлекенсемпе хресченсен респуплĕкне хирĕç пырати йе харпăр çыннăн инттересне хирĕç çеç; 3) преступленине выçлăхпа нуша пирки туни йе унсăрах тунă; 4) преступленине кирек мĕнле усал шухăшпа, çынăн пурлăхĕпе усă курасшăн туни, йе вĕсемсĕрех тунă; 5) сăтăр пулассине пĕлсех преступленине туни, йе тĕттĕм пирки пĕлмесĕр ăна тунă; 6) преступленине хăнăхса çитнĕ преступник (рецидивист) туни, йе пĕрĕмĕш тунă; 7) преступленине ушкăнпа (пантă) йе пĕр пĕчченех тунă; 8) преступленине ирĕксĕрлетсе (хĕç-пăшалпа хăратса, персе т. ы. çавăн пек майпа) йе ăна ирĕксĕрлетмесĕрех тунă; 9) преступлени тăваканĕ ун çинчен малтанах шухăшласа, чейеленсе, тискерленсе туни, йе ăна ăнсăртран, çăмăл шухăшпа, çилтулнипе, йе ăна урăх çын ĕшкĕртнипе, хăратнипе тунă; 10) преступленине ӳссе çитнĕ çын туни, йе ӳссе çитеймен 16 çулпа 18 çул хушшинчи ача, йе 14 çулпа 16 çул хушшинчи çамрăк ача тунăи.

Тата маларах Уколовни Котекс çапла калать: Совет Респуплĕкĕ преступниксемпе хăрушă çынсенчен сыхланас йенĕпе çеç кĕрешет; вĕсене хурлăх кăтартмасăр, ытлашки асаплантармасăр айăп (наказани) хумалла.

Ҫакна вара пӗтӗмпех сутра тӑрса айӑплакан проккурор астуса тӑрат. Хресчен ҫыннине тивекен ӗҫпе сут умне тухнӑ чухне проккурорӑн хресчен халӑхӗн пурнӑҫне, йӑллисене, унӑн инттересне тата сийен куракансене преступникӗ мӗнле ҫынсем иккенне пӗлсе тӑмашкӑн тӑрӑшмалла.

Кунсӑрӑн пуҫне тата сутра проккурор вырӑнне пӗлекентерех ӗҫлекенпе хресчен те тухса преступнике айӑплама пултараҫҫӗ.

**Пурлӑх пирки пулакан тавлашусенче чухӑнпа вӑтам ҫынна проккурор мӗнле пулӑшат.**

Ҫӳлте кӑтартнӑ усал уколовни ӗҫсемсӗр пуҫне тата сутсен харпӑр ҫынсем пӗр пӗринпе йе тӗрлӗрен учрештенисемпе пурлӑх пирки тухакан тавлашусене пӑхмалла пулат. Кун пек ӗҫсене краштански ӗҫсем теҫҫӗ. Респуплӗк инттересӗшӗн йе ӗҫлекенсемпе хресченсен инттересӗшӗн кирлӗ пулсан кун пек ӗҫсем ҫумне те проккурор ҫыханма пултарат, ҫапла вара кун пек ӗҫсемпеле те проккурор чухӑнсемпе вӑтамсене усӑ кӳме пултарат. Ҫапла вара, сӑмахран, чухӑна йе вӑтама вӗсем хутла пӗлмен, йе тӗттӗм майӗпе кам та пулин ҫӗр пирки хӗстерни ҫинчен илтсен, проккурор вӑтампа чухӑн майлӑ пулса сут умне тӑма пултарат. Йе, тата сӑмахран каласан, сиксе тухнӑ нуша пирки пусмӑрлӑха (капалана) кӗмелле ытла та йӳнӗ хакпа выӈӑх-чӗрлӗхне, ҫуна-урапине т. ы. ҫавӑн пек хуҫайствӑна кирлӗ йапаласене сутмалла пулнӑ пулсан— ҫакӑн пек пусмӑрлӑ ӗҫ ҫинчен илтсен, проккурорӑн кам та пулин ун патне пырса ыйтассине кӗтмесӗрех, ӑна пӗтерме (пӑрахӑҫа кӑлармашкӑн) тӑрӑшмалла.

Тата калӑпӑр, проккурор пӗрпӗр учрештени кампа та пулин респуплӗк хыснишӗн усӑсӑр йе сӑтӑр тӑвакан ӗҫпе ҫыхӑнни ҫинчен илтет. Кун пек ӗҫсем те пулма пултараҫҫӗ.

Йе тата хӗрлӗ салтак килйышне саккунсӑр хӗсӗрлеҫҫӗ, йе тарҫа ӗҫленӗшӗн укҫа тӳллемеҫҫӗ, йе тата упӑшки пӑрахнӑ нушаланса пурнакан арӑм хутла пӗлмен майӗпе тӗттӗм пирки ачипӑчисене тӑрантарса

ӳстермешкĕн хăватлă пурнакан упăшкинчен йепле пулăшу (алимент) шыраса илес йĕркене тупма пултараймасť.

Ун пек ĕçсем нумай пулкалаççĕ, вĕсене кунта пурне те кăтартма май та çук, тата вăл питех кирлех те мар. Кашни ĕçлекенпе хресчен те тĕрлĕрен усал ĕçсен (преступленисен) йĕркине тупса, сийен курнă çынна пулăшу кӳресси çеç мар, тĕрлĕрен пурлăх пирки тухакан тавлашусенче те проккурортан пулăшу кĕтме пултарať. Çавăншăн çеç вăл ĕçлекенсемпе хресченсен Советăн проккураттурĕ. Çакна кашни хресченпе ĕçлекенĕнех пĕлмелле. Паллах ĕнтĕ, патша вăхăтĕнчи проккурорсем пекех пуршуаçин проккурорĕсем те çавăн пек ĕçсемшĕн тăрăшман, тăрăшма та пултарайман, мĕншĕн тесен вĕсен пĕтĕм ĕçĕ те улпутсемпе пуршуйсен инттересне сыхласси çеç пулнă.

### Совет проккураттурĕ мĕнле пулса тытăнса тăрať.

Кашни уйесрех проккурорăн помошникĕ пур. Малта каланăччĕ, уйес тăрăх хăвăртрах тухса йалсене пырса çӳресе, вĕсен нушисене тĕрĕсрех пĕлсе тăмашкăн аванрах пултăр тесен, малашне пысăкрах уйессенче проккурорăн помошниксене пĕрре мар, иккĕ лартмалла, тенĕччĕ. Хăш пĕр уйессенче икшер проккурор помошнĕкĕ хунă.

Проккурорăн уйессенчи помошникĕсем кĕпĕрне проккурорĕ кăтартса панипе ĕçлесе тăраççĕ, анчах вырăна лартас йе вырăнтан кăларас пулсан, вĕсене кĕпĕрнери проккурора пекех, Респуплĕкĕн Проккурорĕ çеç пултарať. Çапла вара проккурорăн уйесĕнчи помошнĕкĕ йалти халăх умĕнче тĕпри Совет влаçĕн претставиттĕлĕ пулса тăрať.

Р. Ф. С. С. Р. проккураттурĕ пуçĕнче Йуçтитсин Халăх Комиссарĕ тăрať, вăлах Респуплĕкĕн Проккурорĕ те. Ун çумĕнче Респуплĕкри Проккурорăн помошнĕксем тăрăççĕ, вĕсенчен пĕри Проккурорăн аслă помошнĕкĕ, вăлах Йуçтитсин Халăх Комиссарĕн самеçтиттĕлĕ.

Респуплĕкри Проккурор тĕпри учрештенисемпе Халăх Комиссариачĕсен ĕçĕсене саккунлăх тĕлĕшĕнчен тĕрĕслесе тăрať. Тĕпри пĕр пĕр учрештени сак-

кунсăр ĕç тунине пĕлсенех ун çинчен вăл Пĕтĕм Раç-çейри ĕç тăвакан Тĕп Комиттета йе Халăх Комиссар-сен Канашне проттест парать.

Хăйĕн ĕçĕ тĕлĕшĕпе Республĕкĕн Проккурорĕ Тĕпĕçтăвком умĕнче отчет парать. Вырăнсенчи проккурорсем вырăнти влаçа мар, Республĕкри Проккурора пăхăнса тăраççĕ.

Çапла вара Совет Республĕкĕнче проккурорсем пĕр чентттăрти влаçе çеç пăхăнса тăраççĕ.

Вырăнсенчи проккурорсемпе вĕсен помошнĕкĕсем Совет саккунĕсене хирĕç ĕçсем тăвассипе преступленисене хыттăн тăрса хирĕç кĕрешмелле пултăр тесе, çакăн пек йĕркене Влатимĕр Илйич Ленин тутарчĕ.

К у ç а р а к а н  х у ш с а  к а л а н и: Автономлă Республĕксенче прокурорсене лартасси, вĕсене вырăнтан кăларасси пăртак урăхларах. Автономлă Республĕкĕнчи Иуçтитсин Халăх Комиссарĕ—проккурор, çавăнпа ăна вырăна лартассипе вырăнтан кăларасси Автономлă Республĕкĕн Тĕпĕçтăвкомĕн ĕçĕ. Автономлă Республĕкре кĕпĕрнесем çук пулсан проккурорăн уйессенчи помошнĕкĕсем тӳррех Республĕкри проккурора пăхăнса тăраççĕ. Вĕсене вырăна лартасса та, вырăнтан кăларасса та Республĕкри Проккурорах тăвать. Автономлă Республĕкĕнчи проккурорсем хăйсен ĕçсем тĕлĕшĕнчен Автономлă Республĕкĕн Тĕпĕçтăвкомне пăхăнса тăраççĕ, ăна отчетсем параççĕ. Кунсăрăн пуçне Р. Ф. С. С. Р. Проккурор патне те, çыхăнса тăнă майĕпе хăйсен ĕçĕсем çинчен пĕлтерсе тăраççĕ. Çӳлте каланисем ытти Автономлă Республĕкĕсенче те çав йĕркепех тăраççĕ.

## Улпутсемпе пуршуйсен проккурорĕсенчен Советăн проккурорĕсен уйрăмлăхĕ.

Кĕскен каласан, Совет проккурорĕсен тивĕçлĕхĕсемпе ĕçĕсем,—чухăнсемпе вăтамçемшĕн хаљ каласа тухнă пек усăллă ĕçлесси. Ĕлĕк патша вăхăтĕнче нумайччен пусмăрлăхра пурăннă хресчен халăхĕ сут таврашĕпе проккуротан, тата ытти оркăнсем умĕнче те хăраса чĕтресе çеç тăма вĕренни халиччен те халăх ăшĕнчен тухса пĕтме пултарайман. Пуршуаçипе ул-

путсен саккунĕсене вырӑна кӳртсе ĕҫхалӑхĕ хушшинче мĕн тери йĕркесĕрлĕхсем пулни халĕ асран кайса пĕтмен.

Чӑнах ĕнтĕ патшапала пуршуйсен сучĕсемпе проккурорĕсене—улпутсемпе капиталҫӑсене ĕҫхалӑхĕн йунне ĕммешкĕн пулӑшса тӑракан йытӑсене хресченпе ĕҫлекен нимĕншĕн те ырӑпа асӑнма пултараймасӗ.

Патша вӑхӑтĕнчи сутсем ҫинчен халӑх хӑраса ҫапла каласа хунӑ: „Турӑ ан хуштӑрах сут умне тӑмашкӑн“, „шывран типпĕн тухаймӑн, сутран тӳррĕн хӑтӑлаймӑн“, „сутлашаччен шыва сиксе вилђ“, „вӑйлӑ ҫынпа ан кĕреш, пуйанпа ан сутлаш“ т. ы. ҫавӑн пек сӑмахсемпе, калавсемпе халӑх ĕлĕкхи сута хак хунӑ.

Пуршуаҫипе улпутсем вӑхӑтĕнче ĕҫлекенпе хресчен ҫынне проккурорпа сут̆йа пулаччен тĕвене йĕп ҫӑрти виттĕр тухмашкӑн ҫӑмӑлтарах пулнӑ. Ун чухне сут̆йасемпе проккурорсене пуршуйсем тата улпутсем ҫеҫ тухма пултарнӑ.

Малта калаиинчен ĕнтĕ хађхи пурнӑҫри йĕркесем ĕлĕкхин пек марри аван курӑнса тӑрат̆. Совет респуплĕкĕнче проккурорĕ те, сут̆йи те, милитсионерĕ те ĕҫлекенсемпе хресченсен тӑшманĕ мар, вĕсен инттересĕпе тивĕҫлехсене сыхласа тӑракансем.

Патша вӑхӑтĕнче тата пуршуаҫин ирĕкĕ вӑхӑтĕнче проккурорсене улпутсемпе пуршуйсем ҫеҫ тухма пултарнӑ пулсан, халĕ Совет респуплĕкĕнче кĕретех урӑхла. Совет проккурорĕсем пурте ĕҫлекенсемпе хресченсенчен тухнӑ; вĕсен ĕҫĕ те вара ĕлĕкхи проккурорсен ĕҫĕсенчен уйрӑмах—ĕҫлекенсемпе хресченсен инттересне сыхласси. Совет проккурорĕ пулма улпутсемпе пуршуйсем мар пултараҫҫĕ, ĕҫлекенсемпе хресченсем ҫеҫ. Пĕлекентерех ĕҫлекенсемпе хресченсенчен проккурорсене тухма хатĕрленеҫҫĕ. Ĕҫлекенсемпе хресченсен хушшинчен йĕркеллĕреххисене Совет влаҫĕ халӑх сут̆йипе халӑх саҫҫетаттĕлне ҫеҫ мар, пысӑкрах, паллӑрах ĕҫсемпе проккурор вырӑнне сутра тӑрса халӑх йачĕпе айӑплама та тӑрӑшат̆.

К у ҫ а р а к а н  х у ш с а  к а л а н и: Ĕлĕк патша вӑхӑтĕнче хресченпе ĕҫлекене проккурора тухасси тĕвене йĕп ҫӑрти виттĕр тухассинчен те йӑвӑртарах пулнӑ пулсан, мĕн каламалли пур тĕрлĕрен вактĕвек

халăхсем (сăмахран каласан—чăвашсем) çинчен. Вĕсенчен камăн та пулин проккурора тухма çеç мар, вăл шухăш та пулма пултарайман, мĕншĕн тесен вактĕвек халăхсем вăл вăхăтра виçĕ хутлă пусмăрлăх айĕнче пулнă. Совет респуплĕкĕнче пур халăхсем те пĕр тан, кашнийех вĕсем хăйсен халăх ĕçĕсене хăйсемех тума пултараççĕ. Çапла вара вĕсен сучĕсем те проккурорсем те хăйсен хушшинчен тухнă ĕçлекенсемпе хресченсемех пулса тăраççĕ.

**Револ̆утсилĕ саккунлăха сыхласси пĕтĕм ĕçхалăхĕн ĕçĕ пулмалла.**

Çакăнтан ĕнтĕ пĕтĕм хресчен халăхĕ (ĕçхалăхĕ) проккураттурăна пулăшса тăрасси кирли курăнаť, мĕншĕн тесен пĕтĕм хресчен халăхĕ Совет влаçĕн саккунĕсене сыхлама тытăнсан тин, чăннипех йалсем тĕрлĕрен преступленисемпе саккунсăр ĕçсенчен хăтăлма пултараççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ Совет влаçĕн саккунĕсене сыхламашкăн пĕтĕм хресчен халăхне чĕнесси, вăл—коммуниссен парттипе Совет влаçĕн чи пысăк ĕçĕ. Ахал̆ мар çав ĕнтĕ, ĕçлекенсемпе хресченсене маттур вĕрентсе йертсе пыракан Ленин йулташ ĕçсем çине чиновникле пăхса, ĕçе вăраха тăсса ĕçлени çинчен, тата ĕлĕк вырăс патшалăхĕнче сарăлса çитнĕ вçаткăсемпе кĕрешесси çинчен çырнă чухне çапла каланă: „Вăл йĕркесĕрлĕхсемпе кĕрешмешкĕн мĕн чарса тăраť? Пирĕн саккунсеми? Пирĕн проппакантăи? Апла мар. Саккунсем темĕн чухлех çырнă. Мĕншĕн ĕнтĕ ку кĕрешӳ ăнса пыраймасť? Мĕншĕн тесен ăна пĕр проппакантăпах тума май çук, ăна пĕтĕм халăх пулăшнипе çеç тума пултармалла“, тенĕ.

Ĕçлекенсемпе хресченсене темĕн чухлĕ нумай сăтăр тăвакан тĕрлĕрен преступленисемпе, тата Совет влаçĕн саккунĕсене пăсса тăнине хирĕç кĕрешме тата йăвăртарах. Анчах, халăх пулăшнипе Совет влаçĕ револ̆утсине хирĕç тăракан темĕн чухлĕ нумай йанралсене çапса çĕмĕрнĕ пекех, ку ĕçре те халăх пулăшсан, револ̆утсилĕ саккунлăха хытарăпăр. Халăх ĕнтĕ темиçе çĕр пин ĕçлекенсемпе хресченсем проккураттурăна саккунсене пăсса тăни çинчен пĕлтерсе пулăшаççĕ. Револ̆утсилĕ саккунлăха тĕреклĕлетмешкĕн хал̆хи

çĕршер пин халăх вырăнне малашне мĕлйуншер çынсем кĕрсе пулăшасси çинчен пĕр иккĕленсе тăмалли те çук. Вĕт вĕсем пурте хăйсемех револ̡утсилĕ саккунлăха тăвакансем.

Револ̡утсилĕ саккунлăха тăвакан темиçе мĕлйунлă ĕçлекенсемпе хресченсем хăйсен инттересĕсемшĕн кăларнă саккунĕсене сыхламашкăн проккураттурăна пулăшу парĕç.

## Пайсене кăтартни:

**Советăн проккураттурĕ, тата вăл хресчен халăхне мĕншĕн кирлĕ.**

Стр.

1. Револ̧утси саккунлăхне пурнăҫа кӳртессипе Советăн проккураттурине туни Совет влаҫĕ хресчен халăхĕн пурнăҫне ҫăмăллатасшăн тăрăшнине кăтартать . . . . . . . . . . . . . . 3
2. Револ̧утсилĕ саккунлăх мĕне пĕлтернине тата йал-хуҫайствипе халăх пурлăхне хăпартасси ҫинчен . . . . . . . . . . . . . . . . . 4
3. Револ̧утсилĕ саккунлăх патне епĕр улпутсемпе пуршуйсен контр-револ̧утсине ҫĕнтерсе ҫеҫ ҫитрĕмĕр . . . . . . . . . . . . . . . 6
4. Йалтан пыракан шалăпăсене асăрхаса тăрса йалта револ̧утсилĕ саккунлăха ҫирĕплетмешкĕн проккураттурă пулăшать. Мĕнле шалăпăсемпе проккурор патне пымалла . . . . . . 8
5. Йалта Советăн саккунĕсем ҫинчен пĕлессине проккураттурă пулăшать . . . . . . . . . . . 12
6. Йалта револ̧утсин саккунлăхне ҫирĕплетмешкĕн проккурора пĕр шалăпăсем ҫеҫ мар, хаҫатсем ҫинче ҫырса пĕлтерни те пит нумай пулăшать . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 14
7. Йалта саккунлăха сыхласа, проккурорăн вырăнти ĕҫлĕҫынсен тĕрлĕрен саккунсăр хушусенчен хресченсене сыхламалла . . . . . . . 15
8. Хăрушă усал ҫынсемпе преступниксенчен тасатмашкăн йала проккураттурă пулăшать . . . 17
9. Преступленисемпе кĕрешесси йĕркеллĕ, саккунлă пултăр тесе, проккурор вĕсене тĕпченĕ чух асăрхаса тăрать . . . . . . . . . . 18
10. Тĕрмесене хупнисене йĕркеллĕ саккун хушнă пек тытса тăнине асăрхасси . . . . . . . . 20

11. Ухтарусене саккун кăтартнă пек тумаллине проккурор асăрхаса тăраť . . . . . . . . . . 22
12. Проккурор тата ĕçлексенсемпе хресченсен сучĕ 23
13. Пурлăх пирки пулакан тавлашусенче чухăнпа вăтам çынна проккурор мĕнле пулăшаť . . . 25
14. Совет проккураттурĕ мĕнле пулса тытăнса тăраť . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 26
15. Улпутсемпе пуршуйсен проккурорĕсенчен Советăн проккурорĕсен уйрăмлăхĕ . . . . . . 27
16. Револ̧утсилĕ саккунлăха сыхласси пĕтĕм ĕçхалăхĕн ĕçĕ пулмалла . . . . . . . . . . . . 29

3886

# Чăваш Республĕкĕнчи Йуçтитсин Халăх Комиссариачĕ çакăн пек чăвашла кĕнекесем кăларнă:

1) А. С. КОТЉАРЕВСКИ. Вулăс укçи—тенки мĕнле пухса ăçта йарасси. Хакĕ . . . . . . . . . . . . 20 пус.

2) Н. КУМЫККИН. Р. Ф. С. С. Р-ĕн влаç тытăмĕ йĕрки. Хакĕ . . . . . 25 пус.

3) Н. В. КРЫЛЕНККĂ. Совет Сучĕ мĕнле тытăнса, тата мĕнле ĕçлесе тăрать. Хакĕ . . . . . . . . . . 20 пус.

4) Е. ТЕМПРОВСКИ. Хресчен килĕпе пурлăха уйăрасси. Хакĕ . . . 20 пус.

## Çапăнаççĕ:

1) А. ИОТКОВСКИ. Преступлени тени мĕн вăл пулать, тата вĕсемпе пролеттарин патшалăхĕ мĕнле майсемпе кĕрешет.

2) Н. ЛАКОВИЕР. Совет проккуратturĕ, тата вăл хресчен халăхне мĕншĕн кирлĕ.

Кусемсĕр пуçне тата ытти кĕнекесем те хатĕрленеççĕ.

Хресченсене, йалсовечĕсене, шкулсене, пулăшу комиттечĕсене кăтартнă хакĕнчен йўнĕрех параççĕ.

Кĕнекесене çырса илмелли атрĕс:
ШУПАШКАР, Халăх Йуçтитсин Комиссариачĕ (г. Чебоксары, Н. К. Ю.), ЧАССР.

Вĕсене тата уйессенчи проккурорсем, халăх сучĕсем тата çлетăваттĕлсем патĕнче те илме пулать.

ХАКĔ 20 пус.